25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 НОЯБРЬ 14 ШАМАТКУН 266 (6201) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Коммунистсемпе комсомолецсен теориллӗ пӗлӗвӗсене куллен ӳстерсе пырар

«ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» кӑларнӑ май парти пропагандине йӗркелесси ҫинчен» ВКП(б) Центральный Комитечӗ постановленийӗ йышӑннӑранпа паян 4 ҫул ҫитрӗ. Ҫав постановлени партире тӑракан тата партире тӑман большевиксен идейӑллӑ-политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерме, пирӗн парти, комсомол, совет, профсоюз, хуҫалӑх, культура работникӗсем, совет интеллигенцийӗн чылай пысӑк пайӗ теори тӗлӗшпе кая юлнине пӗтерме пулӑшрӗ.

ВКП(б) Центральный Комитечӗн ҫак постановленине пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫласа пырса, парти пропагандине ҫӗнӗлле йӗркелесе, эпир ҫак тӑватӑ ҫул хушшинче большевизма вӗренсе алла илес, парти членӗсене марксизм-ленинизм теорийӗпе, урӑхла каласан, общество аталанӑвӑн тата политикӑллӑ кӗрешӳ законӗсене пӗлнипе хӗҫпӑшаллантарас, партири тата партире мар большевиксен политикӑллӑ сыхлӑхне ӳстерес тӗлӗшпе паллӑ ӳсӗмсем турӑмӑр.

Вӑл постановлени марксизм-ленинизм пропагандин никӗсне «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» хума хушрӗ. Марксизм-ленинизма вӗренессинче тӗп метод—харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренесси пулса тӑчӗ.

Ҫак тӑватӑ ҫул хушшинче «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» тата марксизм-ленинизм классикӗсен произведенийӗсене вуншар пин коммунистсемпе партире тӑман большевиксем харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренчӗҫ.

ВКП(б) уставӗ парти членӗсене хӑйсен идейӑллӑ-политикӑллӑ пӗлӗвне пӗр вӗҫӗмсӗр ӳстерсе пыма хушать. Большевиксен партийӗн ҫак требованийӗ халӗ, отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн хӑрушӑ кунӗсенче, уйрӑмах паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Халӗ кирек мӗнле йывӑрлӑх умӗнче те чарӑнса тӑмалла мар, кирек мӗнле практикӑллӑ ӗҫе те хӑвӑрт та ӑнӑҫлӑн пурнӑҫламалла, пӗтӗм массӑна фронта пулӑшма, нимӗҫ захватчикӗсене аркатса тӑкма ҫӗклемелле.

«ВКП(б) историйӗн кӗске курсне»—марксизм-ленинизм наукин энциклопедине вӗренсе алла илни совет ҫыннисене хальхи вӑхӑтра пулса иртекен событисене тӗрӗс ӑнланса илме, практикӑллӑ задачӑсене татса пама, ҫак юнлӑ вӑрҫӑ эпир ҫӗнтернипе вӗҫленессине ҫирӗппӗн шанса тӑма вӗрентет, фронта вӑйлӑнрах пулӑшма вӑй хушса парать. **«Марксизм-ленинизм—вӑл ӗҫҫыннисене хӑйсен тӑшманӗсене ҫӗнтерме вӗрентекен чӑн-чӑн тата пӗртен-пӗр наука пулса тӑрать»** (Киров).

Пирӗн партин тата пӗтӗм совет халӑхӗн халӗ пӗр тӗллев—тӑшмана ҫапса аркатасси. Марксистла-ленинла теори—ҫӗнтерӳ патне ертсе пыракан шанчӑклӑ ҫул, пирӗн тӗрӗс ӗҫшӗн, ирӗклӗхшӗн, никама пӑхӑнманлӑхшӑн кӗрешмелли вӑйлӑ хӗҫпӑшал. Ҫавӑнпа халӗ парти историне вӗренесси тата партиллӗ пропаганда ӗҫне вӑйлатасси ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхмалла.

Совет халӑхӗ нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ туса пыракан отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче Канаш районӗнчи коммунистсем хӑйсен политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерес тӗлӗшпе ҫине тӑрса ӗҫлеҫҫӗ. Районри парторганизацисенчи ВКП(б) членӗсемпе кандидачӗсем пурӗ 80 ҫын «ВКП(б) историн кӗске курсне» вӗренсе тухнӑ. Парти членӗсем В. Изюмов, Петухов, Антонов, Д. Васильев тата ытти юлташсем кӗске курса вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн, большевизм историне Маркс, Энгельс, Ленин тата Сталин произведенийӗсем тӑрӑх вӗренме тытӑннӑ.

ВКП(б) Шупашкар хула комитечӗ партиллӗ пропаганда ӗҫне лекцисем урлӑ туса пырассине вӑрҫӑ кунӗсенче уйрӑмах пысӑк вырӑна хунӑ. Вӑрҫӑн 16 уйӑхӗ хушшинче хулара икӗ пин ытла лекци ирттернӗ. ВКП(б) историне тата Сталин юлташ Совет Союзӗн отечественнӑй вӑрҫи ҫинчен каланӑ произведенисене, ҫулпуҫӑн Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци XXV ҫул тултарнӑ ятпа тунӑ докладне вӗренмелли кружоксем чылай предприятисемпе учрежденисенче ӗҫлеме пуҫларӗҫ.

Анчах пирӗн республикӑри чылай парторганизацисем вӑрҫӑ кунӗсенче марксизм-ленинизм теорине пропагандӑлас, партиллӗ пропаганда ӗҫне ертсе пырас ӗҫсене сисӗнмеллех вӑйсӑрлатрӗҫ. Политикӑллӑ агитаци тата тӗнчери лару-тӑру ҫинчен докладсемпе лекцисем тӑвасси ҫине ытларах ҫаврӑнса пӑхса, парти организацисем хӑйсен ӗҫӗнчи ҫак питех те ответлӑ участокра ҫителӗксӗр ӗҫлерӗҫ. Кунта сӑмах ялти парторганизацисем ҫинчен ҫеҫ мар, хуласенчи тата промышленноҫпа транспорт предприятийӗсенчи парторганизацисем ҫинчен те пырать. Иртнӗ ҫулсенче партиллӗ пропаганда ӗҫне лайӑхрах туса пынӑ Канаш хулинчи организацире те вӑрҫӑ кунӗсенче Ленин—Сталин партин историне вӗренсе алла илес ӗҫ сӳрӗкленчӗ. Чылай ҫӗрте «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» тата хальхи лару-тӑрӑва вӗренмелли кружоксен ӗҫӗсем сӳнсе ларнӑ, юлташла калаҫусемпе консультацисене хутранситрен ҫеҫ ирттереҫҫӗ. Иртнӗ уйӑхра районсенчи парти организацийӗсенче пулса иртнӗ отчетпа суйлав пухӑвӗсем партиллӗ пропаганда ӗҫӗ чылай ҫӗрте тивӗҫлӗ вырӑнта тӑманнине кӑтартса пачӗҫ. Вӑрнар, Шупашкар тата ытти районсенчи парткабинетсем парти историне вӗренекенсене пулӑшас тӗлӗшпе консультацисем сахал ирттереҫҫӗ. Хӑшпӗр районсенчи ертсе пырас ӗҫри работниксем хӑйсем те чылайӗшӗ «вӑхӑт ҫук» тесе юлашки вӑхӑтра «ВКП(б) историйӗн кӗске курсне» вӗренме пӑрахнӑ.

Парти организацийӗсен задачи—партиллӗ пропаганда ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене ҫине тӑрса пӗтересси пулса тӑрать. Большевикла пропагандӑра самотек пулма пултараймасть. Малашне марксизм-ленинизм теорине вӗренекенсене пулӑшас майпа ирттерекен лекцисен, консультацисен шутне ӳстермелле ҫеҫ мар, вӗсен пахалӑхне пур енчен те лайӑхлатас пулать. Лекцисен тематики анлӑ, содержанийӗ паха пултӑр, лекцисем пурте ӑнланмалла пулччӑр, вӗсем итлекенсен кӑмӑлне кайччӑр. Парти организацийӗсен—ВКП(б) райкомӗсемпе горкомӗсен, промышленноҫпа транспортри тата колхозсенчи пуҫламӗш парторганизацисен коммунистсемпе беспартийнӑй интеллигентсен идейӑллӑ тата политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерес ӗҫе куллен-кунах ертсе пымалла. Большевизмӑн теорийӗпе историне харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренекенсен ӗҫне тӗрӗслесе тӑрса, вӗренӳре пулӑшса пырас пулать. Харпӑрхӑйӗн идейӑллӑ-политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерме тӑрӑшманнисене тата хӑйсен юлхавлӑхне «пушӑ мар» тата «вӑхӑт ҫитмест» тесе витме тӑрӑшакансене хирӗҫ кӗрешмелле.

Обществӑллӑ аталанӑвӑн законӗсене пӗлнипе хӗҫпӑшаллантаракан марксизм-ленинизм теорине вӗренсе алла илсе пырса, пирӗн кадрсем идейӑпа политика тӗлӗшӗнчен чылай ӳсрӗҫ. Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе пӗтӗм совет халӑхӗ ирсӗр тӑшмана тӗпӗ-йӗрӗпех аркатса тӑкӗ. Сталин юлташӑн историллӗ приказӗ тата унӑн докладӗнчи ҫулӑмлӑ сӑмахсем ҫӗнтерӳ тума чӗнеҫҫӗ. «ВКП(б) историн кӗске курсне» Сталин юлташӑн отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче тухса каланисемпе ҫыхӑнтарса, унӑн юлашки доклачӗпе тата приказӗпе ҫыхӑнтарса вӗренсе пымалла.

ВЦСПС-па СССР СУТУ-ИЛӲ ХАЛӐХ КОМИССАРИАТӖНЧЕ *тата* ЦЕНТРОСОЮЗРА

ВЦСПС, СССР Суту-илӳ Халӑх Комиссариачӗ тата ССР Союзӗпе РСФСР Центросоюзӗ суту-илӳ тата обществӑллӑ питани работникӗсен 1942 ҫулхи виҫҫӗмӗш кварталти социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухса, ҫапла йышӑннӑ:

ЯЛСЕНЧИ МАГАЗИНСЕН ЕНӖПЕ

Чӑваш АСС Республикинчи Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Шуркасси сельповӗн Банновӑри лавкине (заведующийӗ Иванова юлташ)—ВИҪҪӖМӖШ ПРЕМИ—1.000 тенкӗ памалла;

РАЙПОТРЕБСОЮЗСЕМПЕ СЕЛЬПОСЕН ЕНӖПЕ

Вӑрмар райпотребсоюзне (председателӗ И. Федоров юлташ)—ВИҪҪӖМӖШ ПРЕМИ—5.000 тенкӗ тата сельпо валли—2.000 тенкӗ памалла тунӑ.

Танксен колоннисене тума

ЧКАЛОВСКОЕ. Районри ӗҫҫыннисем танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» ятлӑ колоннисене тума укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Ноябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне районӗпе танксен «Колхозник Чувашии» ятлӑ колоннине тума 200 пин тенкӗ укҫа пухӑннӑ. «Ударник», Сталин ячӗпе тӑракан колхозсем ҫак ӗҫ валли 10-шар пин тенкӗ хывнӑ. Ворошилов ячӗпе тӑракан колхоз танксен колоннине тума 16 пин тенкӗ укҫа пухнӑ. Колхоз председателӗ Майоров юлташ хӑй 1000 тенкӗ панӑ. Савӑн й пекех «Ударник» колхоз председателӗ Шамуков, колхозник Сулейманов, «Красное знамя» колхоз председателӗ Пирогов юлташсем ҫак ӗҫ валли 1000-шер тенкӗ панӑ. «Красное знамя», «Маяк» колхозсем танксен колоннисене тума 13-шер пин тенкӗ панӑ. Районра ҫак ӗҫ валли 5.000 тенкӗрен кая укҫа панӑ пӗр колхоз та ҫук.

МТС-ри трактористсемпе комбайнерсем танксен «Тракторист Чувашии» ятлӑ колоннине тума 80 пин тенкӗ укҫа пухса панӑ.

Д. КИРПИЧЕВ.

Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн Политсекторӗ тӑратнӑ тӑрӑх, пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартнӑшӑн тата трактор паркӗпе лайӑх усӑ курнӑшӑн ялхуҫалӑхӗнче малта пыракансен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ:

195. **Йӗпреҫ МТС-ӗ** (директорӗ **Свешников** юлташ, политотдел начальникӗ **Романов** юлташ, старши агрономӗ **Громов** юлташ, старши механикӗ **Михайлов** юлташ). Вӑл трактор ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне, авӑн ҫапассисӗр пуҫне, 100,1 процент тултарнӑ, комбайнпа вырса пуҫтармалли плана 216,3 процент тултарнӑ, газогенераторлӑ тракторсемпе кӗрхи ҫӗртме тумалли плана 109 процент тултарнӑ, газогенераторлӑ тракторсен ӗҫ планне 104,6 процент тултарнӑ.

196. **Хӗрлӗ Чутай МТС-ӗ** (директорӗ **Иванов** юлташ, политотдел начальникӗ **Захаров** юлташ, старши агрономӗ **Власов** юлташ, старши механикӗ **Батыжин** юлташ). Вӑл трактор ӗҫӗсен ҫулталӑкри планне, авӑн ҫапассисӗр пуҫне, 100,1 процент тултарнӑ, комбайнпа вырса пуҫтармалли плана 119,6 процент тултарнӑ, 12.275 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

Колхозниксен хастарлӑ ӗҫӗ

ЙЕПРЕҪ, ноябрӗн 12-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Сталин юлташ 1942 ҫулхи ноябрӗн 6-мӗшӗнче тунӑ доклада районри ӗҫҫыннисем пысӑк хавхаланупа кӗтсе илчӗҫ. Шӑртан ялсоветне кӗрекен «Заря», «Комбайн» колхозсен членӗсем Сталин юлташӑн докладне итленӗ хыҫҫӑн ялхуҫалӑхӗнчи ӗҫсене тата хӑвӑртрах, лайӑхрах туса пыма сӑмах пачӗҫ. Вӗсем авӑн ҫапас ӗҫе ноябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне вӗҫлеме, государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем парас плана ноябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмӗшпех пурнӑҫлама пулчӗҫ. Колхозниксемпе колхозницӑсем кашни лайӑхрах ӗҫлеме тытӑнчӗҫ.

Урапакасси ялсоветӗнчи «Путиловка», «Осоавиахим» колхозсен членӗсем те, Сталин юлташӑн доклачӗ ҫине ответлесе, ӗҫ тухӑҫлӑхне вӑйлӑн ӳстерчӗҫ. «Осоавиахим» колхоз авӑн ҫапса пӗтерчӗ, государство умӗнчи пур парӑмсене те татрӗ. «Путиловка» колхозра хатӗрлев пунктне тырӑ леҫме транспорт бригади организациленӗ. Ҫак икӗ кун хушшинче бригада хатӗрлев пунктне 90 центнер тӗштырӑ леҫсе панӑ, 15 лашапа вӗсем кулленех 20—25-шер центнер турттараҫҫӗ.

Район авӑн ҫапас тата государствӑна тырӑ парса татас ӗҫсене ноябрӗн 25-мӗшӗнче вӗҫлессишӗн кӗрешет. Ноябрӗн 11-мӗшӗ тӗлне тырпулӑн 86 процентне ҫапнӑ, районри 48 колхозран 24-шӗ авӑн ӗҫне вӗҫленӗ, 16 колхоз государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем парас плана пӗтӗмӗшпех пурнӑҫланӑ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Ӗҫ тухӑҫлӑхӗ ӳссе пырать

КОМСОМОЛЬСКОЕ, ноябрӗн 13-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑхӑн малтанхи кунӗнче районри колхозсем 135 гектар ҫинчи тырра ҫапнӑ. Сталин юлташӑн доклачӗпе приказне ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн колхозниксемпе колхозницӑсен ӗҫлес хастарлӑхӗ татах та вӑйланчӗ. Ҫирӗмкунлӑхӑн иккӗмӗш кунӗнче районри колхозсем 245 гектар тыррине ҫапса пуҫтарчӗҫ. Нумай колхозсем кулленхи ӗҫ графикӗсене пурнӑҫласа пыраҫҫӗ. «Искра», «Мотор», «Интернационал» колхозсем авӑн ҫапса пӗтерчӗҫ, районри 6 колхоз государствӑна тырӑ парса татрӗ.

Авӑн ҫапас ӗҫе тата пысӑкрах тимлӗхпе туса пымалла, уйрӑмах вӑрлӑхлӑх клевера шӗкӗлчес ӗҫе васкатмалла.

В. АВВАКУМОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

ГРАФИКА ПУРНӐҪЛАСА ПЫРАССИШӖН ТӐРӐШМАҪҪӖ

СӖНТӖРВӐРРИ, ноябрӗн 13-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Районри колхозсен график тӑрӑх куллен 120 гектар ҫинчи тырра ҫапмалла. Анчах ку вӑл пурнӑҫа кӗрсе пымасть-ха. Районри колхозсем фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑха хутшӑннӑ пулсан та, ӗҫре татӑклӑ улшӑну туни курӑнмасть. Ноябрӗн 10-мӗшӗнче пурӗ 110 гектар тырӑ ҫапнӑ, ноябрӗн 11-мӗшӗнче те 117 гектар ҫеҫ ҫапнӑ. Ӗҫе хӑвӑрт организацилесе ирттерес вырӑнне кунта хӑшпӗр колхозсен председателӗсем хатӗрленсе вӑхӑта нумай ирттереҫҫӗ.

Машинно-тракторнӑй станцин молотилкисем йӗркеллӗн ӗҫлемеҫҫӗ. Нумайӗшӗ вӗсем ӗҫсӗр тӑраҫҫӗ. МТС руководителӗсем хӑйсен ӗҫри ҫаврӑнӑҫусӑрлӑхне пула молотилкӑсем валли сӗрмелли япаласем хатӗрлемен. Ҫавӑнпа 14 сложнӑй молотилкӑран 2—3 молотилка ҫеҫ авӑн ҫапаҫҫӗ, вӗсем те ӗҫ нормине тултарса ӗҫлемеҫҫӗ. Халех улшӑну туни кирлӗ. Фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑхӑн кашни кунӗнче ӗҫ графикне пурнӑҫласа пырассишӗн кӗрешмелле.

Н. КОНДАКОВ.

Чугунҫул валли вутӑ хатӗрлеме районсен ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ памалла

Чӑваш АССР Вӑрман промышленность Халӑх Комиссариачӗн леспромхозӗсемпе завочӗсем оборонӑллӑ заказсене пурнӑҫланӑ вӑхӑтрах чугунҫул транспорчӗ валли вутӑ хатӗрлеҫҫӗ. Асӑннӑ халӑх комиссариачӗ ҫак тӗлӗшпе хӑйне панӑ ҫур ҫулти задание ноябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне хатӗрлес енӗпе 91 процент, турттарас енӗпе 71,5 процент тултарнӑ. Хатӗрлес ӗҫ ҫителӗклӗ хӑвӑртлӑхпа пырать пулин те турттарас ӗҫ юлса пырать-ха. Ҫакӑ вӑл чылай леспромхозсем хатӗрлес ӗҫӗн графикне кунсерен тултарассишӗн кӗрешменнинчен килет. Пӗр ӗҫ тепринчен юлса пынине пур леспромхозсемпе вӑрман завочӗсенче те курма пулать. Малта пыракан Йӗпреҫ, Вӑрнар тата Атӑл леш енчи леспромхозсем хатӗрлес енӗпе плана ытлашшипех тултарнӑ, анчах турттарса тухас енӗпе вара плана пӗри те тултарайман. Уйрӑмах ку тӗлӗшпе Хӗрлӗ Чутайри механизациленӗ вӑрман пункчӗ юлса пырать, вӑл турттарас ӗҫӗн планне 56 процент ҫеҫ тултарнӑ. Турттарас ӗҫ юлса пыни Шӑмӑршӑ, Кире, Канаш леспромхозӗсенче, Ҫӗмӗрлери механизациленӗ вӑрман пунктӗнче тата Атӑлтышӗнчи вӑрман заводӗнче те палӑрать. Буински вӑрман завочӗ вара пур ӗҫре те ҫителӗксӗр хӑвӑртлӑхпа ӗҫлет. Леспромхозсемпе вӑрман завочӗсен малашне графика кашни кун пурнӑҫа кӗртессишӗн кӗрешес пулать.

Вӑрманти ӗҫсен графикӗ хатӗрлес тата турттарас енӗпе пурнӑҫа пӗр пек кӗрсе пыманни тата районсем ӗҫ вӑйӗ кирлӗ чухлӗ парса тӑманнинчен килет. Сӑмахран, Сӗнтӗрвӑрри, Пӑрачкав районӗсем Кире леспромхозне кашни кун ӗҫ вӑйӗ ҫурран 100—110-шар ҫын парас вырӑнне 15—20-шер ҫын ҫеҫ параҫҫӗ. Ӗҫ вӑйӗ тӑратас тӗлӗшпе ҫавӑн пекех Шӑмӑршӑ, Елчӗк, Ҫӗрпӳ, Тӑвай, Красноармейски, Советски, Элӗк, Ҫӗмӗрле районӗсем юлса пыраҫҫӗ. Канаш районӗ вара Йӗпреҫ леспромхозне кунсерен 75 ҫын тӑратас вырӑнне нихҫан та 10—12 ҫынран ытла тӑратмасть.

Районсем вӑрманта ӗҫлеме лашасемпе ҫынсем ҫителӗклӗ парса тӑни чугунҫул валли вутӑ хатӗрлес ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхне татса парать. Кӑна эпир Йӗпреҫ районӗн примерӗнчен лайӑх куратпӑр. Йӗпреҫ райсовет исполкомӗ ӗҫ вӑйне вӑрман ӗҫӗн малтанхи уйӑхӗсенчех ҫителӗклӗ уйӑрса пачӗ те, район вутӑ хатӗрлес плана срокчен икӗ уйӑх малтан тултарчӗ. Ҫавӑн пекех ултӑ уйӑхри ӗҫсен заданине хатӗрлес тата турттарса тухас енӗсемпе Шупашкар, Улатӑр районӗсем хальхи вӑхӑт тӗлне ытлашшипех тултарчӗҫ. Ҫур ҫулти ӗҫсен заданине Кувакино районӗ те ӑнӑҫлӑн вӗҫлесе пырать.

Чугунҫул валли вутӑ хатӗрлесси—оборонӑллӑ питех те пысӑк ӗҫ. Чугунҫула кирлӗ топливӑна вӑхӑтра тата ҫителӗклӗ таран хатӗрлесе панинчен унӑн хӗллехи вӑхӑтри ӑнӑҫлӑхӗ, ҫапла вара фронт валли грузсем турттарса тӑрас ӗҫӗн ӑнӑҫлӑхӗ килет. Парти райкомӗсемпе райсовет исполкомӗсен ҫакна тӗплӗн ӑнланмалла, вӑрманта ӗҫлеме ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ парса тӑмалла.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Чӑваш АССР Совнаркомӗ топливо хатӗрлес тата турттарса кӑларас тӗлӗшпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн 1942 ҫулти октябрьти итогӗсене, ҫавӑн пекех тата вырӑнти промышленность предприятийӗсемпе промысла коопераци артелӗсен ӑмӑртӑвӗн ҫав вӑхӑт хушшинчи итогӗсене пӑхса тухнӑ.

Совнарком ҫапла йышӑннӑ:

Топливо хатӗрлес тата турттарса кӑларас тӗлӗшпе пыракан 1942 ҫулхи октябрьти социализмлӑ ӑмӑртура вырӑнти топливо промышленность управленийӗн Сӗнтӗрвӑрринчи, Канашри, Шӑмӑршӑри тата Ҫӗрпӳри леспромхозӗсем мала тухнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Сӗнтӗрвӑрри леспромхозне (директорӗ Смирнов) пама тата ӑна ӗҫре палӑрнӑ рабочисене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене премилемешкӗн 15 пин тенкӗ укҫа пама йышӑннӑ;

Канаш леспромхозне (директорӗ Лопин, техноручӗ Пискунов тата профоргӗ Андреева)—ӗҫре палӑрнӑ работниксене премилемешкӗн 10 пин тенкӗ преми пама;

Шӑмӑршӑ леспромхозне (директорӗ Гультяев)—ӗҫре палӑрнӑ работниксене премилемешкӗн 5 пин тенкӗ преми пама;

Ҫӗрпӳ леспромхозне (директорӗ Кагановский, профоргӗ Фомичев)—ӗҫре палӑрнӑ работниксене премилемешкӗн 5 пин тенкӗ преми пама йышӑннӑ.

Ҫавӑнпа пӗрлех Совнарком вырӑнти топливо хатӗрлес тата турттарса кӑларас тӗлӗшпе сентябрь уйӑхӗнче Ҫӗмӗрле леспромхозӗ, Кувакино, Пӑрачкав, Советски тата Шӑхасан районӗсенчи вӑрман хатӗрлекен конторӑсем начар ӗҫленине палӑртнӑ.

Вырӑнти промышленность тӗлӗшпе

Чӑваш АССР вырӑнти промышленность предприятийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗнче 1942 ҫулхи октябрьти итогсем тӑрӑх Альгешевӑри ҫатан ҫыхакан «Басон» фабрика тата Улатӑр хулинчи промкомбинат мала тухнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Альгешевӑри ҫатан ҫыхакан «Басон» фабрика аллинче хӑварма (директорӗ Егоров, парторгӗ Малькова фабком председателӗ Федова) тата ӑна социализмлӑ ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилемешкӗн укҫан 15 пин тенкӗ пама;

Улатӑр хулинчи промкомбината (управляющийӗ Гуськов пулнӑ, парторгӗ Зубрицкая, фабком председателӗ Зубрилов, горсовет исполкомӗн председателӗ Поляков)—ӗҫре палӑрнӑ работниксене премилемешкӗн 5 пин тенкӗ преми пама йышӑннӑ.

Совнарком октябрь уйӑхӗнче Шупашкарти техно-ткацки фабрика, уйрӑм ҫынсем валли атӑ-пушмак ҫӗлекен мастерской, Элӗк, Вӑрнар, Красноармейски, Чкаловски тата Шӑхасан районӗсенчи промкомбинатсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Ҫакӑнпа пӗрлех Совнарком октябрь уйӑхӗнче Чувашметровес, Шупашкар, Канаш хулисенчи, Калинино, Первомайски, Сӗнтӗр, Етӗрне тата Шӑмӑршӑ районӗсенчи промкомбинатсем начар ӗҫленине палӑртнӑ.

Совнарком асӑннӑ хуласенчи тата районсенчи советсен исполком председателӗсем хӑйсен промкомбиначӗсене ҫителӗксӗр ертсе пынине палӑртнӑ тата вӗсене ноябрьте ӗҫе тӗпренех лайӑхлатма, 1942 ҫулхи плана пӗтӗмпех тултармалла тума хушнӑ.

Октябрь уйӑхӗнче вырӑнти промышленноҫӑн ӗҫӗ кӑштах лайӑхланнине палӑртса, Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ ҫак промышленность ҫав-ҫавах ҫителӗксӗр ӗҫлет тесе йышӑннӑ.

Промысла коопераци тӗлӗшпе

Чӑваш АССР промысла коопераци артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗнче 1942 ҫулхи октябрьти итогсем тӑрӑх Караньялӗнчи «Труд», Канашри «Авангард», Шупашкарти «Красный мебельщик» тата Карачри Клара Цеткин ячӗпе тӑракан артельсем мала тухнӑ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне Караньялӗнчи «Труд» артелӗн аллинче хӑварма (председателӗ Мокеев, Октябрьски райсовет исполкомӗн председателӗ Петров) тата ӑна социализмлӑ ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилемешкӗн 15 пин тенкӗ укҫа пама;

Канашри «Авангард» артеле (председателӗ Васильев, горсовет исполкомӗн председателӗ Тимофеев)—социализмлӑ ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилемешкӗн 10 пин тенкӗ преми пама;

Карачри Клара Цеткин ячӗпе тӑракан артеле (председателӗ Озерова, райсовет исполкомӗн председателӗ Прытченков социализмлӑ ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилемешкӗн 5 пин тенкӗ преми пама;

Шупашкарти «Красный мебельщик» артеле (председателӗ Егоров, горсовет исполкомӗн председателӗ Климов)—социализмлӑ ӑмӑртура палӑрнӑ работниксене премилемешкӗн 5 пин тенкӗ преми пама йышӑннӑ.

Совнарком октябрь уйӑхӗнче Куславкка районӗнчи «Прогресс», Елчӗк районӗнчи Буденный ячӗпе тӑракан артель, Етӗрне районӗнчи Пошнар артелӗ, Октябрьски районри «Большевик», Советски районри «Трудовик» тата Сӗнтӗр районӗнчи Янӑм артелӗ лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Ҫакӑнпа пӗрлех Совнарком октябрь уйӑхӗнче Пӑрачкав районӗнчи «Красный пищевик», Шупашкар хулинчи «Кожупряжь», «Утильсырье» артельсем, Йӗпреҫ районӗнчи Упакасси артелӗ, Комсомольски районри Ҫӗнӗ Мӑрат артелӗ, Первомайски районри Сигачри артель, Шупашкар районӗнчи Альгешевӑри «Паха тӗрӗ» артель тата Тӑвай районӗнчи «Мартӑн 8-мӗшӗ» артель начар ӗҫленине палӑртнӑ.

Октябрь уйӑхӗнче уйрӑмах Тарпромсоюз (президиум председателӗ Гордеев) системине кӗрекен артельсем япӑх ӗҫленӗ. Октябрьти ӗҫсем ҫинчен отчет тӑратнӑ 18 артельрен уйӑхри плана пӗр артель те тултарман.

Совнарком республикӑри промысла кооперацийӗ октябрь уйӑхӗнче начар ӗҫленине палӑртнӑ. Промысла кооперацийӗ уйӑхри плана мӗнпур продукци енӗпе 65,9 процент, куллен кирлӗ таварсем енӗпе 55 процент ҫеҫ тултарнӑ. Уйрӑмах ҫунасем, спичкӑсем, йывӑҫ кашӑксем, супӑнь тӑвас тӗлӗшпе тата атӑ-пушмаксемпе тумтирсем юсас тӗлӗшпе начар ӗҫленӗ.

Промысла кооперацийӗ начар ӗҫленине чылай артельсенче ӗҫ дисциплини сӳрӗккипе, вӗсен председателӗсем ответлӑха туйманнипе тата ҫавӑн пекех социализмлӑ ӑмӑртупа стахановла движение ҫителӗксӗр сарса пынипе ӑнлантарса памалла.

Промысла союзӗсен председателӗсем артель ӗҫӗсенчи ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерес тӗлӗшпе татӑклӑ мерӑсем халиччен те йышӑнмаҫҫӗ, артельсенчен учетпа отчет ӗҫне тӗрӗс туса пыма тата ӑна лайӑхлатма ыйтмаҫҫӗ.

Районсемпе хуласенчи советсен исполкомӗсем промысла кооперацийӗн ӗҫӗпе ҫав-ҫавах сахал интересленеҫҫӗ, артельсен ӗҫӗсене тӗрӗслесе тӑмаҫҫӗ, юлса пыракан артельсене плана тултарас тӗлӗшпе вӑхӑтра пулӑшу памаҫҫӗ.

Совнарком древпромсоюз, тарпромсоюз, швейпромсоюз президиум председателӗсене Андреев, Гордеев, Писарева юлташсене тата хуласемпе районсенчи советсен исполком председателӗсене промысла артелӗсен ӗҫне лайӑхлатас тӗлӗшпе татӑклӑ мерӑсем йышӑнма хушнӑ.

Ҫулпуҫ чӗнӗвӗ ҫине ответлесе

КАЛИНИНО, ноябрӗн 12-мӗшӗ. (**Тлефонпа**). Районри колхозсемпе предприятисенче, учрежденисемпе шкулсенче Сталин юлташӑн историллӗ доклачӗпе приказне анлӑн сӳтсе яваҫҫӗ.

«Искра» колхозӑн клубӗ колхозниксемпе тулнӑ. Ҫамрӑк каччӑсемпе хӗрупраҫсен хушшинче ачаллӑ арӑмсемпе шурӑ сухаллӑ стариксем лараҫҫӗ. Агитатор тин ҫеҫ килсе ҫитнӗ хаҫат ҫинчен Сталин юлташӑн докладне вулать, колхозниксем ӑна тимлӗн итлесе лараҫҫӗ. Ҫулпуҫӑн витӗмлӗ сӑмахӗсем кашнин чӗринех кӗрсе вырнаҫаҫҫӗ, колхозниксем ҫавӑнпа хӑйсен шухӑш-кӑмӑлӗсене пӗр-пӗрне каласа пама васкаҫҫӗ.

— Тӑшмана хӑвӑртрах ҫӗнтерес тесен, пирӗн халӗ нихҫанхинчен те хастарланрах ӗҫлемелле,—илтӗнчӗ 60 ҫултан иртнӗ Верховцев колхозникӑн сасси.—Виҫӗ ывӑлӑм отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче ҫапӑҫаҫҫӗ, эпӗ вӗсене колхозра тӑрӑшса ӗҫленипе пулӑшатӑп. Кирлех пулсан, эпӗ хам та алла хӗҫпӑшал тытса ирсӗр тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫма каятӑп.

«Искра» колхоз членӗсем ноябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне авӑн ҫапса пӗтерме тата государство умӗнчи парӑмсене татма пулчӗҫ.

Ҫулпуҫ чӗнӗвӗ ҫине ответлесе, «Родина» колхоз членӗсем те ялхуҫалӑх ӗҫӗсене вӗҫлеме ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗҫ. Вӗсем паян 15 лавлӑ хӗрлӗ обозпа Вӑрнарти хатӗрлев пунктне тырӑ леҫрӗҫ. Колхоз тепӗр икӗ кунран государство умӗнчи парӑмсене пӗтӗмӗшпех татать.

Ф. РОМАНОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 12-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград районĕнче, Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчикран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Ноябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче артиллерин 5 батарейине, зенитнăй пулеметсен 10 точкине тата 15 миномета пусарнă, чугунçул çинчи 2 состава çĕмĕрнĕ.

* * *

Сталинград районĕнче противник, хăйĕн резервĕсене илсе пырса тата çапăçусенче лучăрканнă чаçĕсене çĕнĕлле ушкăнласа, хула оборонин пур участокĕсенче те çĕнĕрен наступлени пуçласа янă. Хулана хӳтĕлекенсем гитлеровецсен йышлă атакисене сирсе янă. Пĕр участокра кăна, пысăк çухатусем тӳссе, нимĕçсем пирĕн оборона ăшне 100—200 метра яхăн савăлланса кĕме пултарнă. Оборонăн çурçĕр участокĕнче пирĕн чаçсем контратака тунă та тăшмана 400 метр каялла ывăтса янă. Çак участокра пулса иртнĕ çапăçусенче кăна нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 4 танк, 14 оруди, 16 миномет пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен икĕ складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Меркулов командир пулса ертсе пыракан подразделенисем халăх пурăнакан пĕр пунктра çапăçса нимĕçсене нумай çуртсенчен хĕссе кăларнă. Противник темиçе хутчен контратака тунă, анчах та вĕсем ăнăçман. Халăх пурăнакан çав пунктра икĕ кун пынă çапăçусенче румынсен пĕр батальон ытларах пехотине вĕлерсе пĕтернĕ. Пирĕн боецсем 11 станковăй тата ручной пулемет, нумай винтовкăсемпе боеприпассем тытса илнĕ. Тепĕр участокра противникăн пĕр роти пирĕн позицисене çапăçса тĕрĕслеме пикеннĕ. Пулеметсемпе тата минометсемпе персе, тăшмана каялла хăваласа янă.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем активлăн кĕрешнĕ, противник хирĕç тăнине çĕнтерсе, вĕсем ăна халăх пурăнакан икĕ пунктран çапса кăларнă. Çав участокри çапăçусенче пĕр кун хушшинче противникăн 170 автомашинине тата артиллерипе минометсен темиçе батарейине пĕтерсе тăкнă. Малтанхи даннăйсем тăрăх, çапăçу хирĕнче нимĕçсен 400 ытла вилĕ выртса юлнă. Нимĕçсенчен юсавлă 2 танк, пĕр тягач, ултă кĕпçеллĕ миномет, 2 оруди, снарядсем тултарнă 108 ещĕк, 10.000 патрон, боеприпассен икĕ складне тата продовольствин пĕр складне туртса илнĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем противникăн пысăках мар ушкăнĕсен атакисене сире-сире янă. Разведка тăвакан отрядсем нимĕçсен 130 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 2 истребительне персе ӳкернĕ.

* * *

Карели фронтĕнче Абду Калимов юлташ командир пулса ертсе пыракан разведчиксен отрячĕ противникăн тылне кĕрсе кайнă та ăна сасартăк пырса çапнă. Пирĕн боецсем 30 гитлеровеца çити вĕлернĕ, унтан пĕр çухатусăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансен отрячĕ юлашки вăхăтра противникăн фронт патне пыракан 2 поездне ӳпĕнтерсе янă. Крушени пулнă пирки 2 паровоз, 40 вагон çĕмĕрĕлнĕ тата 220 нимĕç салтакĕ вилнĕ.

* * *

Нимĕç салтакĕн Норберт Моравицăн пĕр Иоганн Кулавик ятлă çын патне яма çырнă çырăвне тупнă. Çырура вăл çапла çырнă: «Пире йĕри-тавра партизансем; жертвăсăр пĕр кун та иртмест. Кăнтăрла чăтма пулать. Çĕрле вара чăтма çук асаплă. Иртнĕ эрнере партизансем пирĕн пункта тапăнчĕç. Вĕсемпе çапăçнă хыççăн эпир 20 салтака пытартăмăр. Вырăссем пирĕн тылра иккĕмĕш вăрçă туса пыраççĕ. Кунта фронтринчен те хăрушăрах, мĕншĕн тесен сана противник хăçан, ăçта тата хăш енчен тапăнассине пĕлме çук. Кашни çĕрех эпир хамăра тапăнассине кĕтетпĕр. Çакна пула кунта ăсран тайăлма та пулать».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Курск облаçĕнчи «Красная Звезда» артелĕн колхозникĕсене тискеррĕн тыткаланă. Гитлерла палачсем 7 ватă çынна тата 41 хĕрарăма çакса вĕлернĕ. Курск облаçĕнчи Дмитровски районри 6 яла нимĕçсем тĕпĕ-йĕрĕпех çунтарса янă, унта пурăнакансене пурне те ирĕксĕр ĕçлеттерме хăваласа кайнă.

* * *

Берлинри радио çакăн пек пĕлтерӳ сарать: «Германия халь хăйĕн экономикине, пуринчен ытла Кавказ шучĕпе, самаях аванлатрĕ. Халĕ эпир хамăра кирлĕ нефтьрен 30 процентне Кавказран илетпĕр»,—тесе пĕлтерет. Нимĕçсем çапла каппайса каланине илтсессĕн, вырăссен çак ăслă пословицине аса илетĕн: «Выçă чăхха тĕлĕкре те вир курăнать», тенĕ ваттисем. Гитлеровецсем хăйсене нефть нумай çитменнине туйса тăраççĕ. Сывăрман чухне те, тĕлĕкре те вĕсем Кавказ нефтьне кураççĕ. Калама çук пысăк çухатусем тӳссе, нимĕçсем Майкопри нефтепромысласене туртса илчĕç. Анчах унта вĕсем нефть илеймерĕç тата илеймеççĕ те. Промысласен оборудованине тата нефть запасĕсене унтан вăхăтра куçарса кайнă, нефть промыслисене пĕтĕмпех юрăхсăра кăларнă. Нимĕçсем хăшпĕр нефтепромысласене юсама хăтланнă, анчах ĕç тухман. Гитлеровецсене совет нефчĕпе усă курма май пулмарĕ.

Ноябрĕн 13-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 13-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчикран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Сталинград районĕнче вăйлă çапăçусем пулса пынă. Пирĕн чаçсем хăйсен позицийĕсене çирĕппĕн хӳтĕлесе тăраççĕ, противникăн пехотипе танкĕсен атакисене сире-сире яраççĕ. Хулана хӳтĕлекенсем тăшмана пысăк çухатусем тӳстереççĕ. Пĕр участокра 8 красноармеецпа старши сержант Филатов хăйсен подразделенин флангне хӳтĕлесе тăнă. Гитлеровецсем виçĕ хут атака тунă, анчах кашнинчех вĕсене каялла хăваласа янă. Тăваттăмĕш хутĕнче нимĕçсем атакăна пехотăн пĕр ротине кĕртсе янă. Тан мар çапăçу виçĕ сехет ытла пынă, анчах çапах та гитлеровецсем пирĕн 9 боеца çĕнтерме пултарайман. Çапăçу хирĕнче 60 нимĕç вилсе юлнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн атакине сирсе ярса нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă, пĕр танка тата 3 противотанковăй орудие çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн разведчиксен ушкăнĕ противник вырнаçнă вырăна кĕрсе кайнă та виçĕ дзота сирпĕнтерсе янă тата вуншар гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре Н-ски чаçăн артиллерисчĕсем противникăн 4 бронемашинине, 105 миллиметрлă тупăсен тата минометсен батарейисене пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра Шармайданов юлташ командир пулса ертсе пыракан артиллеристсем нимĕçсен 2 танкне çĕмĕрнĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре противник пĕр юханшыв урлă каçма хăтланса пăхнă. Совет артиллерисчĕсем тĕл персе каçăсене çĕмĕрнĕ тата нимĕçсене чылай пысăк çухату тӳстернĕ. Тепĕр участокра гитлеровецсем çапăçса пырса разведка тума тытăннă, анчах 100 салтак ытла çухатнă хыççăн малтанхи позицисем патнех чакнă.

Икĕ кун хушшинче пирĕн зенитнăй артиллерирен персе нимĕçсен 8 самолетне ӳкернĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем икĕ кун хушшинче нимĕçсен 550 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. Пĕр кун хушшинче Ленинград патне пымалли вырăнсенче нимĕçсен 11 самолетне пĕтерсе тăкнă. Вĕсенчен 7 самолетне сывлăшри çапăçусенче тата 4 самолетне зенитнăй артиллерирен персе ӳкернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче артиллерирен пĕр-пĕрне хирĕç персе тăнă тата разведчиксем кĕрешнĕ. Пирĕн артиллерирен персе тата снайперсем пенине пула 300 яхăн гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, 4 дзота çĕмĕрнĕ, противникăн боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă. Совет зенитчикĕсем тăшманăн 5 самолетне персе ӳкернĕ. Миронов сержант орудийĕн расчечĕ пĕр бомбардировщика персе ӳкернĕ, Миронов сержантăн зенитнăй орудийĕнчен персе ку таранччен пĕтĕмпе нимĕçсен 7 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсен снайперĕсем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 215 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Карелс-финн Советлă республикин оккупациленĕ районĕсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ юлашки вăхăтра противникăн 9 грузовой автомашинине пĕтерсе тăкнă, телефонпа телеграф линине виçĕ километр хушши ытла касса татнă тата 65 белофинна вĕлерсе пĕтернĕ.

Карелсемпе финсен тепĕр отрядĕнчи партизансен ушкăнĕ чугунçул çинче фронта каякан эшелона ӳпĕнтерсе янă. Паровоз тата 21 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Тăшманăн 200 салтакĕпе офицерĕ вилнĕ тата аманнă.

* * *

Турку (Финляндия) сывăхĕнче çак кунсенче пысăк арман çунса кайнă. Пушара пула çуртйĕрсем, машинăсем, çавăн пекех тата 2000 тонна ытла тĕштырăпа çăнăх пĕтнĕ, тĕштырăпа çăнăха нимĕçсен Финляндири войскисем валли хатĕрленĕ пулнă. Финлянди халăхĕ валли продовольстви питех те сахал пăмалла тунине хирĕçлесе, çав армана Финлянди патриочĕсем çунтарса янă пулĕ, тесе шутлаççĕ.

Ют çĕршывсенче

Рузвельт пресс-конференцире тухса калани

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт пресс-конференцире тухса каласа, Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем ăнăçлăн аталанса пыраççĕ пулмалла тесе пĕлтернĕ. Анчах та президент çакăн пирки ытлашши хавхаланса ӳкме кирлĕ марри çинчен асăрхаттарнă. Англин Египетри тата Ливири операцийĕсем те çавăн пекех ăнăçлăн пулса пыраççĕ.

Наступлени пуçланни пирки чарăнса тăрса, Рузвельт çапла каланă: халиччен Гитлера хирĕç пысăк наступлени тума пӳлсе тăнă факторсем халĕ ĕнтĕ чăрмавсем пулма пăрахнă, тенĕ.

Рузвельт çакна кăтартса панă: ларутăрăва тĕпчене тăрăх, хăшпĕр йышши хĕçпăшалсене туса кăларас ĕç çителĕксĕр пулнă пирки, çавăн пекех тата çынсемпе материалсене куçарма транспорт тĕлĕшĕнчен ĕç хĕсĕкрех пулнă пирки 1942 çулхи çуллаччен пысăк наступлени пуçласа яма май çук пек туйăнатчĕ, тенĕ. Кăçалхи июнĕн пуçламĕшĕнче, Англипе Америкăн генеральнăй штабĕсен представителĕсем калаçусем туса ирттернĕ чухне, 1942 çулта, пуринчен ытларах, войскăсене тивĕçлĕ çĕре куçармалли майсем çинчен, 1943 çулта вара пысăкрах наступлени пуçласа ярасси çинчен чарăнса тăнă. Июнĕн вĕçĕнче вара Африкăра наступлени пуçласси çинчен каласса татăлнă. Июлĕн вĕçĕнче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англия—ăçта мĕнле войскăсем, мĕн чухлĕ йышпа антарасси çинчен тата Африкăри операцисен ытти тĕрлĕ деталĕсем çинчен тăракан тĕрлĕ ыйтусене татса панă. Августăн вĕçĕнче англичансемпе американецсем операцисене хăçан пуçламалли куна малтанлăха палăртса хунă. Çакăн хыççăн вара шăпланса лармa тата çак ыйту тĕлĕшпе сахал чухлакан çынсем иккĕмĕш фронта халех уçма ыйтса критикăланине тӳссе ирттерме лекнĕ. Малалла Рузвельт çапла каланă: вĕсем, нумай уйăх каярах, Рузвельт та, Черчилль те магазинсене кĕрсе, хатĕр тăракан иккĕмĕш фронта ... илме пултарас суккине ăнланса илнĕ. Чи малтан вăрçă операцийĕсенче усă курма кирлĕ материал пирки, çав операцисен ... сăкĕшĕпе характерĕ пирки ыйтăва татмалла пулнă, унтан вара çав материала илсе, ... тивĕçлĕ виçесемпе виççе касас шутпа, ... та çĕвĕçĕ патне каймалла пулнă. Çавăн пек тумтире çĕлесе хатĕрлеме нумай уйăхсем кирлĕ пулчĕç. Ĕç чăннипех те ăнăçлă пултăр тесе, нумай хатĕрленме лекрĕ. Правительство хăйĕн ресурсĕсене пĕлме тивĕçлĕ тата пĕр-пĕр урăх тĕллеве пурнăçа кĕртес тесен, тепĕр тĕллеврен пăрăнса кайма кирлипе кирлĕ марри çинчен ĕçе татма тивĕçлĕ. Пĕр правительство та, мĕнпур тĕллевсене пĕтĕм тĕнчипе, чи пысăк хăвăртлăхпа татса парас тесен те, татса пама пултараймасть. Унăн малтан çынсемпе хĕçпăшалсем тупмалла, унтан вара вĕсем ăçта противникпа çапăçма пултараççĕ, вĕсене çавăнта вырнаçтармалла. Çакна тума тĕплĕн хатĕрленес пулать.

Молотов Америкăна пырса кайни пирки панă ыйту çине ответлесе, Рузвельт çапла каланă: эпĕ вăрçă ĕçĕнчи вăрттăнлăхсене уçса пама пултараймастăп, анчах та пичет представителĕсене çапла шантарса калама пулать: асăннă калаçусем мĕнле пыни çинчен тата мĕнле решенисем йышăнни çинчен эпир хамăрăн кĕрешӳри тĕп союзниксене вăхăтра пĕлтернĕ.

Дьепп районĕнчи операци çӳлте асăннă программăн пайĕ пулса тăнипе тăманни çинчен ыйтнине хирĕç Рузвельт çапла ответленĕ: Дьеппри, Китайри тата ытти вырăнсенчи событисем çав решенисемпе çыхăнса тăраççĕ, тенĕ. Çав решенисене Черчилль Мускава кайиччен йышăннă-и?—тесе ыйтнине хирĕç президент çырлахтаракан ответ панă. Войскăсене ăçта антарасси пирки тата çав операцисем валли хатĕрленĕ хĕçпăшаллă вăйсем мĕнле характерлă пуласси пирки решение операцисем пуçланмалли куна палăртиччен сахалтан та пĕр уйăх малтан йышăннă,—тесе кăтартса панă Рузвельт.

Рузвельт малалла: вăл Марокко султанне послани яни çинчен тата Тунисăн бейне, Францин Тунисри верховнăй комиссарне, Францин Алжирти губернаторне çавăн пек посланисемех яни çинчен пĕлтернĕ.

Корреспондентсенчен пĕри: кăçалхи пĕчĕкрех настуленипе килес çулхи пысăкрах наступлени хушшинче чарăнса тăма Рузвельта сăлтав панă чăрмавсем халĕ пур-и?—тесе ыйтнă. Рузвельт çак ыйту çине хирĕçле ответ панă. Çурçĕр Африкăри операцисенче малалла наступлени туса пырассине пӳлсе тăма нимĕнле сăлтав та çук, тенĕ вăл. Хальхи вăхăтра пире пӳлсе тăракан чăрмавсем сахалланчĕç, анчах та халĕ чи лайăххи—Çурçĕр Африка çине ытларах çаврăнса пăхни пулса тăрать, тенĕ Рузвельт.

Рузвельт: çитес çул вĕçленнĕ тĕле Америка Çарĕн йышĕ хальхи вăхăтри 4,5 миллион çын вырăнне 7,5 миллион çынна çитет пулмалла тесе пĕлтернĕ. Тинĕс-Çар Флочĕн личнăй составĕ хальхи вăхăтри пĕр миллион çын вырăнне 1,5 миллион çынна çитет пулмалла, тинĕс пехотипе çыранри оборона çарĕн йышĕ 300 пин çын вырăнне 700 пин çынна çитет пулмалла. Çавна май хĕçпăшал туса кăларассине ӳстермелле, çакна тума вара промышленноçа çĕнĕрен 4 миллион ытла рабочи явăçтармалла.

Египета хĕçпăшалсем тăратни çинчен Рузвельт пĕлтерни

ВАШИНГТОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт çапла пĕлтернĕ: хĕçпăшалсем кивçен е арендăна памалли закон тăрăх, Америкăран материалсем парса тăни англичансене Египетра çитĕнӳ тума чылай пулăшнă. Юлашки 9 уйăх хушшинче уйрăмах нумай хĕçпăшал янă, Египета пĕтĕмпе 1.000 самолет ытла, грузовиксемпе çĕршер орудисем ăсатнă.

Египет çарĕсен хĕçпăшалĕн ытларах пайĕ Англирен тухнă хĕçпăшал пулса тăрать, тенĕ Рузвельт. Çапах та,—тенĕ вăл,—Америкăри предприятисемпе судоверфьсенче туса хатĕрленĕ çавтери паха та нумай йышлă хĕçпăшал çĕнтерӳ тума пулăшнишĕн пирĕн мухтанма та право пур».

Англи авиацийĕ Гамбурга тапăнни

ЛОНДОН, ноябрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: иртнĕ çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Çурçĕр-хĕвеланăç Германири темиçе пункта, вăл шутрах Гамбурга та тапăннă. Бомбардировщиксем чылай нумай бомба пăрахнă. Англин 15 самолечĕ хăйсен базине таврăнман.

Францири арестсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Францин оккупациленмен зонинчи мĕнпур пысăк хуласенче çынсене массăллăн арестлесси пырать. Çав çынсем, Виши правительствин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, «противника активлă пулăшу парса тăраççĕ».

Çурçĕр Африкăра вăрçă ĕçĕсем чарăннă

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Çурçĕр Африкăра союзниксен войскисемпе француз войскисем хушшинче вăрçă ĕçĕсем ноябрĕн 11-мĕшĕнче 7 сехетре чарăннă.

Союзниксен Çурçĕр Африкăри хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксене хирĕç тăнă юлашки пункт—Марокко пулнă. Унта Паттон генерал-майор Мишелье адмиралпа канашланă хыççăн вăрçă ĕçĕсене чарса лартма приказ панă.

Алжирта Эйзенхауэр генералăн представителĕсемпе адмирал Дарлан пĕрле канашланă хыççăн Дарлан Францин Çурçĕр Африкинчи хĕçпăшаллă вăйĕсен, çав шутра Мароккорисен те, пур командующийĕсене те вăрçă ĕçĕсене чарса лартма приказ панă.

Пĕрлешӳллĕ Штатсенче Франци суднисене вăхăтлăха конфискациленĕ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Францин США-ри портсенче тăракан суднисене вăхăтлăха конфискациленĕ.

Оккупацилемен Францире англичансемпе американецсене вырăнтан вырăна куçма тата çĕршывран тухса кайма чарнă

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Вишири радио çапла пĕлтерет: Лаваль правительстви хушнă тăрăх, Францин оккупацилемен пайĕнче англичансемпе американецсене вырăнтан вырăна куçма тата çĕршывран тухса кайма чарса лартнă.

Англин Египетри наступленийĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: 8-мĕш арми тăшманăн Киренаикăна чакса пыракан бронетанковăй армийĕн юлашкийĕсене çаплах хăваласа пырать. Ноябрĕн 11-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Тобрука тапăннă. Ĕнер сывлăшри çапăçусенче противникăн 23 самолетне персе ӳкернĕ. Ноябрĕн 10-мĕшĕнче Тунис çывăхĕнче противникăн аэродромĕ çине бомбăсем пăрахнă, унта сахалтан та 19 самолета çунтарса янă. Ноябрĕн 11-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Сардинири аэродромсене тепĕр хут тапăннă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: бронетанковăй вăйсен малти отрячĕсем Ливипе Египет хушшинчи чикке çитнĕ ĕнтĕ, хăшпĕр тĕлте вĕсем чикĕри пралук карса тунă чăрмавсенчен иртсе кайнă. Тăшманăн чаçĕсем, пуринчен ытла Хальфайя районĕнче, каялла чакса пыраççĕ. Çумăр çума чарăнни операцисене малалла сарса пыма пулăшать. Англи чаçĕсем Сиди-Баррани районне противникран тасатса пыраççĕ.

Германи войскисем Лиона пырса кĕнĕ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Паян кăнтăрла Германи войскисем Лиона пырса кĕнĕ.

Германи войскисем Марселе пырса кĕнĕ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Вишире официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Германи войскисем Марселе пырса кĕнĕ.

Совет Союзĕпе Америка хушшинчи туслăх ячĕпе Нью-Йоркра пухăннă с'езд

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕпе 8-мĕшĕнче Нью-Йоркра Медисон сквер-Гардер залĕнче Совет Союзĕпе Америка хушшинчи туслăх ячĕпе съезд пулса иртнĕ. Съездра Америкăри обществăллă организацисен, профсоюзсен, наукăн тата ытти тĕрлĕ организацисен представителĕсем—2.000 делегат пулнă. Съезд митинг пулнипе вĕçленнĕ. Çав митингра 20.000 çын пулнă. Зала кĕме пултарайман нумай пин çын ораторсен сăмахĕсене урамсенче радиопа итленĕ. Съезда Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕнчи посолĕ пулнă Дэвис председатель пулса ертсе пынă. Съездра—США-н вице-президенчĕ Уэллес, СССР посолĕ Литвинов, Америка çарĕн тип çĕрти вăйĕсен командующийĕ генерал Макнейер, Нью-Йорк штачĕн губернаторĕ Леман, Нью-Йорк хулин мэрĕ Ла-Гардиа, финанс енĕпе ĕçлекен паллă деятель Томас Ламонт, сенатор Пеппер, Америкăри ĕç федерацийĕн председателĕ Грин, производствăллă профсоюзсен конгресĕн представителĕ Томас тата ыттисем те пулнă. Съезда президент Рузвельт, генерал Эйзенхауэр тата США-ри ытти паллă деятельсем саламсем янă.

Съезд Америкăпа Совет Союзĕ вăрçăра тата мирлĕ вăхăтра пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлес ыйтусене сӳтсе-явнă.

Чылай делегатсем хăйсен сăмахĕсенче ССР Союзĕ 25 çул хушшинче наукăра, халăх сывлăхне сыхлас ĕçре, хĕрарăмсемпе ачасен пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе, культура, оборона, çар производстви тĕлĕшпе тата профсоюзсен движенийĕнче тунă çитĕнӳсем çинче уйрăмах нумай чарăнса тăнă.

Съездра США-н вице-президенчĕ Уэллес сăмах тухса каланă. Çурçĕр Африкăра аталанса пыракан событисем пирки чарăнса тăрса, Уэллес çапла каланă: «Вăтаçĕр тинĕсе çĕнтерсе илни Германин кайри алăкне уçса пăрахать тата Кăнтăрти Российйăна материалсем парса тăмалли çула кĕскетме май парать», тенĕ.

Съезд паха вырăн йышăнса тăнине палăртса, Уэллес малалла çапла каланă: «Çурçĕрпе кăнтăртан, хĕвелтухăçĕпе хĕвеланăçĕнчен килнĕ американецсем вырăс союзникне тивĕçлĕ вырăна хурса пахалама съезда пухăннă. Вырăссен пĕтĕм историйĕнче те паттăрлăхăн тата кирек мĕнле жертвăсем те тӳссе ирттерме хатĕр тăнин примерĕ Российйăн нихăçан та хальхин пек витĕмлĕн тухса тăман».

Çак съезд,—тенĕ малалла Уэллес,—Америка халăхĕ Российйăна пулăшма тата ăна паянах пулăшма хатĕр тănине кăтартса парать. Пуринчен те паллă, президент Рузвельт çарпа тинĕс министерствисене тата мĕнпур çар учрежденийĕсене чи малтан Российйăна пулăшма приказ панă. Президент Российйăна пур тĕрлĕ пулăшу та парса тăма йышăнни майлă Америка халăхĕ çирĕп тăрать.

Уэллес ССР Союзĕн нациллĕ политики пирки уйрăмăн чарăнса тăнă. ССР Союзĕнче мĕнпур расăсемпе национальноçсем пĕр тан пулмалли правăна вĕçне çитиччен пурнăçа кĕртнĕ, тенĕ.

«ССР Союзĕ нимĕç захватчикĕсене ăнăçлăн хирĕç тăма пултарнин сăлтавĕсенчен пĕри вăл—Сталин халăха çутта кăларас тĕлĕшпе демократие тулин пурнăçа кĕртни пулса тăрать», тесе шутлатăп», тенĕ Уэллес. Ленинпа Сталин,—тенĕ Уэллес,—вырăс халăхне вăл культура тĕлĕшпе ĕмĕр-ĕмĕр выçăхса пурăннине çырлахтарма май туса панă, Россия вара 20 çул хушшинче талккишĕпе хут пĕлекен çĕршыв пулса тăчĕ. «Россия хăй çак юлашки 20 çул хушшинче тунă çитĕнӳсене малалла тата тепĕр 20 çул хушши аталантарса пынă пулсан, вăл США-па хăваласа иртсе кайнă пулĕччĕ».

Фашистла варварствăна хирĕç пыракан хальхи кĕрешӳре ССР Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене икĕшне çыхăнтарса тăракан пĕтĕмĕшлĕ интерессене палăртса, Уэллес юлашкинчен çапла каланă: фашистла агресси пĕтĕм тĕнчене хăратса тăнине пĕтерсе тăкассишĕн икĕ халăх та вĕçне çитиччченех кĕрешĕç кăна мар, вĕсем çавăн пекех тата «хăйсен пысăк влиянийĕпе çĕнĕ демократи тăвас ĕçре усă курĕç, çав демократи вăл мĕнпур тĕнчен шанчăкĕ пулса тăрĕ».

Съездра СССР посолĕ Литвинов юлташ, сăмахпа тухса, çапла каланă: «Сталинграда хӳтĕлекенсене, халиччен пулман геройлăхпа чăтăмлăхăн примерĕсене кăтартса панăскерсене, Америка халăхĕ паян тивĕçлĕ вырăна хурса хаклать тата хăй çакăн пирки тĕлĕнсе хĕпĕртени çинчен пĕлтерет. Хĕрлĕ Çарпа совет халăхне тивĕçлĕ вырăна хурса хакласа, пĕр инкеклĕ йăнăша—Совет Союзне мирлĕ пурнăçăн хăватлă факторĕ вырăнне хурса хакламан пирки пулнă йăнăша никам та йышăнмасăр иртсе кайма пултараймасть. Çав йăнăш, паллах, вăл хальхи вăрçăн сăлтавĕсенчен пĕри пулса тăрать. Ку вăрçă вăл хăй кăна этемлĕхе халиччен 100 çул хушшинче пулса иртнĕ мĕнпур вăрçăсенчен, вăл шутрах Наполеон туса пынă вăрçăсенчен те, нумайрах хĕнхурсемпе асапсем, ишĕлтерӳсем кӳчĕ.

Германия хăй иртнĕ вăрçăра поражени тӳснишĕн тавăрма шутланă идейăран Гитлер фашистсем тĕнчере пуçпулса тăрас идея туса хучĕ. Çав идея вăл аслă державăсене икĕ лагере уйăрас тата Совет Союзне пĕччен тăратса хăварас ĕмĕт çинче никĕсленсе тăнă. Аслă державăсем Совет Союзĕпе тӳррĕн те таччăн çыхăнса ĕçлени гитлеризм пуласси пĕтерне пулĕччĕ, агрессиллĕ çĕршывсен мĕнпур ĕмĕчĕсене арката янă пулĕччĕ. Халĕ ĕнтĕ хальхи вăхăтшăн та тата пуласлăхшăн та иртнĕ вăхăтри çав йăнăша йышăнса тивĕçлĕ уроксем тунă тесе шанма пулать. Совет Союзĕпе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи туслăх пĕр-пĕрине вĕçне çитиччченех ăнланни çинче, пĕр-пĕрине хисеплесе шанса тăни çинче никĕсленсе тăрать, çакă вăл пĕрлешнĕ çĕршывсем пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлес системăра тивĕçлĕ вырăн йышăнмалла, çавăн пек пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçлеме пире вăрçа çĕнтерӳ патне илсе çитерес пĕрлĕхлĕ шухăш хушать тата çакă вăл вăрçă хыççăнхи питех те пысăк ыйтусене татса пама кирлĕ».

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен ССР Союзĕнчи посолĕ пулнă Дэвис съездра сăмахпа тухса, çапла каланă: «Питех те паха япала—пур тĕрлĕ тĕн тытакан, пур тĕрлĕ наци çыннисем пулса тăракан тата политикăра пур тĕрлĕ шухăш тытакан пиншер американецсем паян хăйсем Совет Союзĕнчен тĕлĕнсе хĕпĕртени çинчен пĕлтереççĕ. Хĕрлĕ Çарăн халиччен ун пек ниçта та, никамăн та пулман паттăрлăхĕпе геройлăхне—мухтав! Аслă Совет халăхĕн чăтăмлăхне—мухтав! Совет Союзĕн çулпуçĕсене мухтав! Вĕсем малаллине витĕр курса тăни тата вĕсен пысăк ăсĕ кăна вăрă-хурахсен—агрессорсен наступленине чарса лартма пултарчĕ».

Съездра çавăн пекех тата сенатор Пеппер, финанс тĕлĕшпе ĕçлекен паллă деятель Томас Ламонт, Америка çарĕн тип çĕрти вăйĕсен командующийĕ генерал Макнейер, Америкăри ĕç федерацийĕн председателĕ Грин, автомобиль промышленноçĕнче ĕçлекен рабочисен профсоюзĕн председателĕ Томас, философи профессорĕ Макмагон, Нью-Йорк хулин мэрĕ Ла-Гардиа т. ыт. те сăмахсем тухса каланă.

Съезд вĕçĕнче пулнă массăллă митинг резолюци йышăннă. Çав резолюцире митинг совет халăхĕпе унăн руководителĕсене саламлать тата çапăçу хирĕнче çĕнтерӳ тăвиччченех кĕрешме сăмах парать.

Съезд Литвинов юлташа, Сталин юлташа пама тесе, «Америкăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх кĕнекине» панă. Çав кĕнеке çине Совет Союзне тав тăвакан тата пĕрлешнĕ çĕршывсем çĕнтерессишĕн пыракан кĕрешĕве мĕнпур вăйсене пама, вăрçă хыççăн пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса ĕçлеме сăмах паракан нумай пиншер американецсем алă пуснă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—93, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф б. 58 84 п. л.

НТ 989